**МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ**

**Министерство образования Чувашской Республики**

**Отдел образования, молодежной политики и спорта администрации Красночетайского муниципального округа**

**МБОУ "Атнарская СОШ"**

| РАССМОТРЕНО | СОГЛАСОВАНО | УТВЕРЖДЕНО |
| --- | --- | --- |
| на педагогическом Совете МБОУ «Атнарская СОШ» | Заместитель директора Канцелярова А.И. | Директор МБОУ «Атнарская СОШ» Кудряшов С.И. |
| Протокол №1 от 28.08.2023 | от 30.08.2023 | Приказ № 79 от 30.08.2023 |

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

(ID 1516231)

**учебного предмета «Литературное чтение на родном чувашском языке»**

для обучающихся 1-4 классов

ДОКУМЕНТ ПОДПИСАН ЭЛЕКТРОННОЙ ПОДПИСЬЮ

Сертификат: 078c60aa3efc1ca7fb3952c438a025a6
Владелец: Кудряшов Сергей Иванович
Действителен: с 10.02.2023 до 05.05.2024

**с. Атнары - 2023**

**Пояснительная записка.**

Программа по литературному чтению на родном (чувашском) языке на уровне начального общего образования разработана с целью оказания методической помощи учителю в создании рабочей программы по учебному предмету, ориентированной на современные тенденции в образовании и активные методы обучения.

Литературное чтение на родном (чувашском) языке формирует основные компетенции в сфере литературного чтения, изучение данного предмета способствует развитию интеллектуально-познавательных, коммуникативных, художественно-эстетических способностей обучающихся, формированию важнейших нравственно-этических представлений, приобщению личности к чувашской национальной культуре.

Включенность литературного чтения на родном (чувашском) языке в общую систему начального общего образования обеспечивается содержательными связями с другими учебными предметами. В аспекте повышения уровня владения родной речью, формирования языковой и литературной функциональной грамотности литературного чтения на родном (чувашском) языке тесно связано с учебным предметом «Родной (чувашский) язык». Условия двуязычия и поликультурности в Чувашской Республике, определяют линию связи данного учебного предмета с учебными предметами «Русский язык» и «Литературное чтение» и это открывает возможность диалога русской и чувашской литератур и культур. Социализации личности, ее речевому и духовному развитию способствуют также связи учебного предмета «Литературное чтение на родном (чувашском) языке» с учебными предметами «Музыка», «Изобразительное искусство», «Окружающий мир». «Литература вулавĕ» (Литературное чтение на родном (чувашском) языке) – это один из основных предметов гуманитарного цикла на уровне начального общего образования. Успешное изучение предмета обеспечивает результативность обучения другим предметам.

Программа по литературному чтению на родном (чувашском) языке учитывает актуальные задачи развития, обучения и воспитания обучающихся, предметное содержание системы начального общего образования, психолого-возрастные особенности обучающихся. В основе Программы лежит системно-деятельностный подход. Она нацелена на целевые приоритеты, сформулированные в федеральной рабочей программе воспитания.

Построение программы по литературному чтению на родном (чувашском) языке основано на концентрическом принципе. В каждом последующем классе освоенные на предыдущем этапе языковые знания и умения, речевые навыки повторяются, закрепляются и расширяются на новом материале. В основу отбора произведений положены общедидактические принципы обучения, в том числе: соответствие возрастным возможностям и особенностям восприятия обучающимися фольклорных произведений и литературных текстов, представленность в произведениях нравственно-эстетических ценностей, культурных традиций народов России, отдельных произведений выдающихся представителей мировой детской литературы. Важным принципом отбора содержания учебного предмета «Литературное чтение на родном (чувашском) языке» является представленность разных жанров, видов и стилей произведений, обеспечивающих формирование функциональной литературной грамотности обучающегося, а также возможность достижения метапредметных результатов, способности обучающегося воспринимать различные учебные тексты при изучении других предметов учебного плана начального общего образования.

В содержании программы по литературному чтению на родном (чувашском) языке выделяются следующие содержательные линии: речевая деятельность (пуплев ĕç-хĕлĕ), литературоведческая пропедевтика (литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ), творческая деятельность (ăславлăх ĕç-хĕлĕ), библиографическая культура (библиографи культури), круг детского чтения (ача-пăча вулав карти).

Изучение литературного чтения на родном (чувашском) языке направлено на достижение следующих целей:

совершенствование всех видов речевой деятельности, овладение навыками работы с разными видами текстов, формирование читательского кругозора и приобретение опыта самостоятельной читательской деятельности;

овладение техникой смыслового чтения вслух, «про себя» и текстовой деятельностью, обеспечивающей понимание и использование информации для решения учебных задач;

развитие художественно-творческих и познавательных способностей, эмоциональной отзывчивости при чтении художественных произведений, формирование эстетического отношения к искусству слова и осмысление прочитанного;

формирование интереса к истории, традиции, искусству своего народа, а также к истории и культуре народов многонациональной России и других стран.

Общее число часов, рекомендованных для изучения литературного чтения на родном (чувашском) языке, – 112 часов: в 1 классе – 10 часов (1 час в неделю), во 2 классе – 34 часа (1 час в неделю), в 3 классе – 34 часа (1 час в неделю), в 4 классе – 34 часа (1 час в неделю).

Освоение программы по литературному чтению на родном (чувашском) языке в 1 классе начинается вводным интегрированным курсом «Обучение грамоте» – 46 часов (2 часа в неделю: 1 час родного (чувашского) языка и 1 час литературного чтения на родном (чувашском) языке. Продолжительность – 23 учебные недели). Далее начинается раздельное изучение родного (чувашского) языка и литературного чтения на родном (чувашском) языке. На изучение литературного чтения на родном (чувашском) языке в 1 классе рекомендуется отводить не менее 10 учебных недель (10 часов).

## Предметăн пулас результачĕсем

**1 Харкамлăх (личностные):**

- ачасем хăйсем вĕренекен пулнине ăнланни, вĕренекенĕн яваплăхне уçăмлани;
- ачасем тăван çĕршыв, тăван халăх, тăван чĕлхе, литература ăнлавсене ăша хывни, хăйсем хăш халăх ывăл-хĕрĕ пулнине ăнланни, вĕсен тăван халăха хисеплес туйăм амаланма пуçлани;
- ачасем таврари пурнăç, этем, çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатни, тавракурăмĕ йĕркеленсе пыни;
- харпăр хăй хăтланăвĕсене сăнама-асăрхама, вĕсемшĕн  яваплă пулма хăнăхса пыни;
- шкулта, класра, урамра, килте, хăнара хăвна мĕнле тытмаллине, уроксене мĕнле хатĕрленмеллине, ĕç вырăнне хатĕрлемеллине, парта хушшинче мĕнле лармаллине, ĕç хатĕрĕсемпе мĕнле ус= курмаллине, ĕçе тăрăшса, тимлĕ, тирпейлĕ тумаллине ăнланни;
- тимлĕх калăпăшĕ, пахалăхĕ, самантлăх, ятарлă тата ирĕклĕ астăвăмĕ аталанни;
- хайлавсенчи сăнарсен лайăх тата начар енĕсене шута илни;
- пĕчĕккĕн аслисемпе пĕрле ĕçе хăнăхса пымаллине, пурнăçра çак хăнăхусем кирлĕ пулассине  ăнланни;
- ĕмĕтленни, вĕренни пурнăçра кирлĕ пулние тавçăрни.
- шкулта вĕренни пĕлӳ пухмалли, аталанмалли, харпăр хăй пурнăçне кăсăклăрах, усăллăрах тума вĕренмелли тĕп мел пулнине ăша хуни;
- ачан кăмăл-сипечĕ çырĕпленсе пыни: ваттисене хисеплемеллине, çынпа ырă пулмаллине, çынсем хушшинче хăвна мĕнле тытмаллине, чĕр чунсене юратмаллине ăнланса илни;
- шухăшлав  ăслайĕсем туптанни.

**2 Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем (метапредметные)**

***2.1.Пĕлӳлĕх(познавательные):***

- итленĕ е вуланă чух мĕнле лармаллине тата урокра кирлĕ хатĕрсемпе мĕнле усă курмаллине пĕлни;
- таврари япаласене, пулăмсене тĕпчес ăнтăлав аталанни;
- таврари япаласемпе пулăмсем çинчен мĕн пĕлнине системăлани: «Тăван çĕр-шыв» ăнлава уçăмлани. Вăл çуралнă вырăн, тăван ял, тавралăх, хăй пурăнакан республика тата çĕр-шыв (Раççей) пулнине ăнланни, унăн культури, мухтавлă çыннисем çинчен пĕлни; çут çанталăк законĕсем, япаласемпе пулăмсем пĕр-пĕринпе çыхăнса аталаннине курни;
- тавралăх енĕсене, япалан вырăнне кăтартма, тавралăхри вырăнне палăртма пĕлни;
- япаласен пĕрпеклĕхне, уйрăмлăхне, вĕсем мĕнпе уйрăлса тăнине курма, палăртма пултарайни;
- ачан тавракурăмĕ анлăланни: çут çанталăкри пулăмсем, çулталăк вăхăчĕсем, çемье, чĕр чунсем, ачасен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлни, тĕнче курăмĕ йĕркеленсе пыни;
- туйăм культури çивĕчленни: кирлĕ вăхăтра пулăшма, мĕн тумалла, мĕнле тумаллине тавçăра пуçлани;
-пысăк, пĕчĕк, тан units ус лăха курни, логикăллă шайлаштарайни;
- вĕренӳ хатĕрĕсенче кирлĕ материала шыраса тупма пĕлни;
- вĕренӳ хатĕрĕсенче панă символсене, модельсене, схемăсене,паллăсене ăнланни;

***2.2.Йĕркелӳ-хаклав(регулятивные):***

- тантăшĕсен тата харпăр хăй ĕçне тищкерейни тата пахалайни;
- тишкерӳ – пĕтĕçтерӳ ĕçне хăнăхни, пĕтĕмĕшлине пайсем çине уйăрма, пайĕсене пĕтĕçтерме пĕлни;
- тĕрĕс курма, япаласен уçлăхри вырăнне палăртма пултарни;
- хăйĕн ĕçне вĕрентекен, юлташĕсем хакланине йышнни;
- вĕрентекен, класпа пĕрле палăртнă задачăна татса памалли тĕрлĕ майсем тупни;
- хăвăн шухăшна ăнлантарса парайни;
- йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;
- ĕç йĕркине, мĕн хыççăн мĕн тумаллине, мĕншĕн ун пек тумаллине тавçăрни;
- ĕçĕн кашни тапхăрне вĕрентекен пулăшнипе хак парса пырайни;
- харпăр хăй ĕçне планлама пĕлни.

***2.3 Хутшăну(коммуникативные):***

- шухăша тĕрĕс те уçăмлă, çыхăнуллă каласа пама тăрăшни;
- текстпа ĕçлеме пĕлни, вулани çинчен çыхăнуллă тата уçăмлă каласа пама тăрăшни;
- ачан пуплевĕ, йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;
-пуплев культури аталанни: пĕр-пĕр япала, пулăм, ĕç çинчен çыхăнуллă, кирлĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама пултарни; юлташпа, аслисемпе, ваттисемпе мĕн çинчен тата мĕнле сăмахсемпе усă курса калаçмаллине ăнкарни, кампа калаçнă чух, хăçан, мĕнле сăмахсемпе (сывлăх сунни, тав туни, сывпулашни) усă курмаллине тавçăрни;
- çывăх, хирĕçле, пĕр пĕлтерĕшлĕ, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене тĕрĕсрех, тарăнрах ăнланни, вĕсен ретĕнче кирлине суйлайни;
- сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшне ăнланни;
- чăваш чĕлхинче сăмахсен предложенире çирĕп йĕрке пуррине ăнланни, ăна пуплевре тытса пырайни;
- каласа парассин тĕрлĕ тĕсĕсене (калав, сăнлав, уйлав) пĕлни. Вĕсен тытăмĕпе уйрăмлăхĕсене курма, калавăн тĕрлĕ тĕсне йĕркелеме пултарайни;
- калав темине, тĕп шухăшне палăртайни;

- хутшăну пуплевĕ (диалог) тытăмне, унти предложенисен хăй евĕрлĕхне (ытларах тулли мар предложенисем) пĕлни. Диалог шалашĕ пĕр темăна, пĕр тĕп шухăша пăхăнса тăнине ăнланни. Майĕпен хутшăну пуплевне тĕрлĕ пуплев ситуацийĕсенче усă курма пултарни;
- ушкăнпа ĕçлеме пĕлни;
- сăмах йышĕ пуянланни;
- çынсем тĕрлĕрен шухăшлама пултарнине ăнланни.

**3.** ***Предметăн пайрам (предметные) результачĕсем:***
- илемлĕ хайлавсене йышăнма, итлеме-ăнланма малалла хăнăхса пыни;
- «халăх сăмахлăхĕ», «ача-пăча сăмахлăхĕ» ăнлавсене уçăмлама пĕлни;
- чĕнӳ-йыхрав юррисемпе паллашса вĕсене мĕнле тĕллевпе каланине палăртма пултарни, мĕнле йĕркеленине сăнама пĕлни;
- шутлав сăввисем тахçан авал пулса кайнине ăнланни;
- тупмалли юмахсен хăйевĕрлĕхне, тытăмне сăнама пĕлни;
- илемлĕ хайлав мелĕсене (танлаштару, сăпатлантару) уйăрса илме пĕлни, вĕсене тупмалли юмахсенче тупайни; тупмалли юмахсем хайланă чухне çак мелсемпе усă курма пĕлни;
- «юмах» жанрăн хăйевĕрлĕхне ăнланса илни; юмах логикипе сюжетне сăнама пултарни; юмах тытăмĕн хăш-пĕр вăрттăнлăхĕсене уçăмлама ăнтăлни;
- «илемлĕ литература», «хайлав», «автор» ăнлавсене уçса пама пултарни;
- «калав», «сăвă» ăнлавсене уçăмлайни;
- сăвăласа çырнă хайлавсен тулашĕ, вĕсен хăйевĕрлĕхне сăнаса курма, «рифма», «ритм» ăнлавсене уçăмлама пĕлни;
- сăвăри йĕрке вĕçĕсем сасă тĕлĕшĕнчен пĕр пек янăрани çеç çителĕксĕр, шухăш уçăмлăхĕ те пулмаллине ăнланни;
- калава ансаттăн тишкерме вĕренни;
- сăвăласа çырнă хайлавсене туйма-ăнланма (восприятие) вĕренни;
- автор сăвăсенче тĕрлĕ кăмăл-туйăма палăртнине ăнланни;
- калав мĕн çинчен пулнине ăнланни, калав темине уçăмлама вĕренни;
- калав теми унта мĕн çинчен каланипе çыхăнса тăнине ăнланни;
- илемлĕ хайлавсенчи шӳте ăнланма пĕлни.

## 2. Вĕренӳ предмечĕн шалашĕ ( содержание)

***1 класс (33 сех)***

**Шкула вĕренме каяр-ха.**
Кĕнеке хакĕ.Шкул
Йыхрав тата шутлав сăввисем, хăвăрткаларăшсем, тупмалли юмахсемпе ваттисен сăмахĕсем.
**Юмах юпа тăрринче...**
Чăваш тата ытти халăхсен юмахĕсем.
**Вăйă вылятпăр.**
Ача-пăча вăййисемпе паллашни, вăйă сăввисем.
**Теттесем.**
Пĕчĕк ачасен теттисем, теттесен илемĕ.
**Ачасем çинчен.**
Суха туни, улахра ларни,тĕрлĕрен ача-пăча пăтăрмахĕсем.
**Чĕр чунсем çинчен.**
Шаши . Хур аçи. Лашапа кашкăр. Мулкачсем. Кушак çури. Сарă чăх. Чанасем. Путене. Автан. Путек. Йытă. Шапасем.
**Тавралăх - асамлă тĕнче**

Çулла çинчен çырнă сăвăсем. Çуллахи тавралăх илемĕ. Çуллахи пулăмсем.
**Килсе çитрĕ хаваслă хĕл**
Юр. Ытарми хĕл.Тăвайкки. Хĕллехи кунсем.Сивĕ Мучи. Юр пĕрчи.
**Ача - пăча сăмахлăхĕ**
Витлешӳ сăввисем. Йыхрав сăввисем, хăвăрткаларăшсем, тупмалли юмахсемпе ваттисен сăмахĕсем.
**Юмах ятăм, юптартăм.**
Улăп халапĕсем.
**Пирĕн вăйă-кулă**
Пукане. Ташлать Илемпи. Шак-шак-шак.Чуччу
**Ачасем çинчен** Чăваш ачи. Пысăк ĕç. Эп хамах.Инкек.Ӳкерчĕк. Аслă ача. Макăрмарĕ. Юланут.
**Чĕр чунсем çинчен**
Хураçка. Шуркка. Кушак. Кӳлĕре.Ырă ĕне. Томка ишме вĕренни. Пакша. Çут çанталăк.
**Тавралăх - асамлă тĕнче**
Çуркунне . Çавăнпа хитре тĕнче. Çумăр умĕн. Çумăр. Тĕтре.Уйăх ачи. Ытарайми тăван кĕтес.

**2 класс (34сех)**
**Шкула**
Шкула килнишĕн савăнни е ĕлĕк вĕренме йывăр пулни е шкул хатĕрĕсем урăхла пулни.
**Мĕн-ши вăл Тăван çĕршыв**

Савнă çĕр, Чăваш çĕршывĕ. Пирĕн çĕршыври хуласемпе ялсем. Тăван республика

çыннисен ĕçĕ-хĕлĕ. «Пирĕн ял (хула)»

**Кĕркунне**
Кĕрĕн тĕрлĕ тапхăрне (пуçламăшĕ, ылтăн кĕркунне, хура кĕркунне), чĕрчунсемпе ӳсен-тăрансен пурнăçĕнчи улшăнусене сăнлакан калавсемпе сăвăсем. «Кĕрхи сăнсем»
**Халăх сăмахлăхĕнчен**
Чăваш тата ытти халăхсен юррисем, ваттисен сăмахесем, туптарусем
**Юмахсем**

Чăваш тата ытти халăхсен юмахĕсем
**Эпир - туслă ачасем.**

Ачасен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ, вĕсем туслă пулни, пĕр-пĕрне пулăшни.
**Хĕлле.**
Хĕллехи çанталăк. Чĕрчунсемпе ӳсен-тăрансен хĕллехи пурнăçĕ.Çĕнĕ çула кĕтсе илни. «Хĕл çитсен»

**Ĕç телей те савăнăç кӳрет.**
Ĕç çинчен, тĕрлĕ професси çинчен, ĕçĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ, халăх пурлăхĕшĕн тăрăшни, ĕç çынна телей кӳни çинчен çырнă калавсемпе сăвăсем.
**Тăван кил-йышра.**
Пирĕн несĕлсем. Аннесемпе асаннесем, кукамайсемпе аппасем, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ. Аннесем çинчен çырнă калавсемпе сăвăсем.
**Килчĕ ырă çуркунне.**

Чĕрчунсемпе ӳсен-тăрансен пурнăçĕнчи улшăнусем. Паăр кайни. Ачасен вăййи- кулли. Аслисен çурхи ĕçĕсем. Космонавтика кунĕ. Космонавтсем çинчен.

**Чĕрчунсем - пирĕн туссем.** Чĕрчунсем çинчен çырнă калавсем, сăвăсем, ваттисен сăмах ĕсемпе туптарусем (тупмалли юмахсем). Чĕрчунсене хӳтĕлесси, вĕсене упрасси
**Ӳсен-тăран тĕнчи**

Вăрман пурнăçĕ, ӳсен-тăран çинчен çырнă сăвă-юрă, калавсемпе халапсем.

**Çу уйăхне кĕтĕмĕр.**
Çуллахи çут çанталăк, уй-хирти тата пахчари ĕçсем çинчен çырнă калавсемпе сăвăсем, тĕрленчĕксем.

КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ

Вулав материалĕ. Ача-пăча валли кăларнă 8-30 страницăллă кĕнекесем. Ачасем хăйсем тĕллĕн ăшра тата тепĕр хут саспа суйласа вуламалли сăвăсем, юмахсем, калавсем (калăпăшĕ - 5 страница таран).
Вулав тематики. Чăваш çĕршывĕ, ачасен пурнăçĕпе ĕçĕсем, чĕрчунсемпе ӳсен-тăран çинчен. Тем те пĕр курса çӳрени. Юмахсем.
Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси. Кĕнекен тĕп пайĕсене, вĕсен ячĕсене (хуплашка, страницăсем, тупмалли) пĕлесси.
Кĕнекене мĕн çинченнине ячĕпе авторĕ, ӳкерчĕкесем тăрăх ăнкарасси (I çурçул); мĕн е кам çинчен итленине, вуланине ыйтсан тĕрĕс хуравласси.
4-5 кĕнекене темине кура ушкăнласа уйăрасси; вулав темине палăртасси, кĕнекене унăн хăйне евĕр паллисем тăрах суйласа илесси. I çур çулта - итленĕ текста, II çур çулта - харпăр хăй тĕллĕн вуланине аса илсе ыйтусем тăрăх каласа парасси. Тĕрлĕ пулăма, сăнарсен ĕçĕ-хĕлĕпе хăтланкалашĕсене тĕрĕс хак парасси. Кĕнеке куравĕпе, сĕнӳ плакачĕпе (I çурçул), хуплашкасен картотекипе тата ансат каталог карточкипе (II çурçул) паллаштарасси.
I-II класра тăтăшах курнă ача-пăча кĕнекисен авторĕсене тĕрĕс аса илесси.
Ачасен харпăр хăй тĕллĕн кĕнеке вулас кăмăл туртăмне вăйлатасси; класри вулавçă кĕтесне тирпейлесе тăма хăнăхтарасси, ун çине таянса тĕрлĕрен литература вăййипе паллаштарасси. Вуланă хайлавсен уйрăм пайĕсене куç кĕрет выляса кăтартасси.

**3 класс (34 сех)**
**Ак çитрĕ сентябрь**
Г.Волков «Çамрăкла вĕренни- чул çинче», Г.Сапгир «Вĕреннĕ лаша», «Мăйăр хуппи», К.Беляев «Чи хаклă парне».
**Чăваш çĕршывĕ**
Ушинский К .,Чăваш Патшалăх гимнĕ, Х.Кашкăр, Н.Янкас, С.Вишневский, Ю.Петров-Вирьял.
**Кĕркунне.**
Н.Теветкел, Н. Исмуков. И.Соколов-Микитов, М.Волкова, О.Туркай, Н. Янкас.
**Халăх сăмахлăхĕ**
Тупмалли юмахсем, вăйă-шăпа юрри-сăвви. Вăйă юррисем, хăш пĕр хускану вăййи йĕрки, пулмасла халап (К. Чулкаç). Юптарусем: Эзоп, И.Крылов, Л Толстой.
**Улăп йăхĕсем эпир, туссем**
**Г**.Юмарт. Библирен. Улăп халапĕсем.
**Асамлă хĕл**
**В**.Эктел, А.Пушкин, Н. Сладков, чăваш халăх юмахĕ, В.Харитонов, А. Смолин, Г.Харлампьев, Н.Силпи.
**Юмах юпа тăрринче**

Чăваш халăх юмахĕ, Еврей халăх юмахĕ, пушкăрт халăх юмахĕ, Удмурт халăх юмахĕ, А.Пушкин.

**Эпир-сăпайлă ачасем**.

Н.Карай, М.Джалиль, Р.Минатуллин, А.Кăлкан, А. Галкин, Н. Иванов, И.Шухши, Г.Волков, Л.Ковалюк, А. Ерусланов, О.Уайльд, И.Исемпек, К.Ушинский.

**Çур хаваслăхĕ**.

И.Исмуков, Л.Смолина, Н.Некрасов, У.Мишши, М.Кипек, Н.Соколов-Микитов, Г.Снегирев, К.Иванов, Н.Матвеев, А.Артемьев.

**Кĕрленĕ вăрçă çĕр синче тахçан**

Тăван çĕршывăн аслă вăрçин паттăрĕсем, тыл ĕçченĕсем. Аслă çĕнтерӳ çинчен калакан хайлавсем.

**Чĕр чун тĕнчи**

Н.Ишентей, С.Элкер, Н.Иванов, Л.Ковалчюк, М.Матвеев, Г.Орлов.

**Ытарайми, асран кайми тăван тавралăх**. И.Дубанов, В.Харитонов, Г.Орлов, М.Волкова, Р.Сарпи.Х.Уяр, Х.Юлдашев, У.Мишши, Г.Харлампьев.

## КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ

**Вулав материалĕ:** Кĕçĕн çулхи ачасем валли кăларнă чăваш, вырăс тата ытти тăванла халăхсен, ютри çыравçăсен кĕнекисем. «Тетте» журналпа «Тантăш» хаçатри материалсем.

**Вулав тематики.** Аваллăх çинчен. Ырă пурнăça ĕмĕтленсе пурăнакан халăхăн кулленхи ĕçĕсем. Ачасен ĕçĕ-хĕлĕ. Чăваш, вырăс тата ытти тăванла халăхсен юмахĕсем. Тăван халăх историйĕпе унăн ывăл-хĕрĕ, ал ĕç тата ăс-хакăл культури çинчен çырнă кĕнекесем. Нукăпа техника темипе çырнă ачасем ăнланмалла статьясем. Темтепĕр курса çӳрени çинчен калакан статьясем.

**Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси**. Класс тулашĕнчи вулав урокне хатĕрленнĕ май кирлĕ кĕнекене харпăр хай тĕллĕн суйласа вулама, тĕрлĕрен пулăшу кĕнекипе, хаçат-журналпа усă курма пĕлесси.

Вĕрентӳçĕ сĕннĕ е харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса мĕн вуланине кĕскен каласа парасси, вуланă сăнар çинчен çыхăнуллă калав тăвасси. Вулама сĕннĕ темăпах 3-5 кĕнеке таран пĕлесси. Пулăшу кĕнекисемпе усă курасси.

«Тантăш» хаçатпа «Тетте» журнала тĕллевлĕн вуласси, вĕсемпе урокра тата класс тулашĕнче усă курасси.

Кĕнеке мĕн çинченнине унăн хуплашки, титул листи, тупмаллипе ӳкерчĕкĕсем, ум сăмахĕпе юлашкинчен калани тăрăх ăнкарасси. Кирлĕ кĕнекен е хаçат-журналти статьян ятне, унăн авторне кăтартса тĕрĕс çырса илесси. Кăмăла каякан кĕнекене харпăр хăй тĕлленех библиотекăран илсе вуласси

**4 класс (34 сех)**

**Аван-и, шкул саккийĕ!**

Шкул. Шкул ачисен савăнăçĕ.

**Килсе çитрĕ тулăх кĕр**

Кĕрхи çут çанталăк. Çынсен ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕр чунсен пурнăçĕ. Ĕç çыннисем çут çанталăка упрассишĕн тăрăшни, çак ĕçе ачасем те хутшăнни.

**Ку вăл - ман Тăван çĕршыв**

Чăваш халăхĕ. Чăваш чĕлхи. Тăван халăх аваллăхе, ун синчен калакан хайлавсем.

**Пирĕн йăла-йĕрке**

Чăваш халăх йăлисем. Вĕсене упраса хакласси.

**Шурă юр çусассăн**

Хĕл çинчен чăваш писателĕсем çырнă хайлавсем.

**Чăваш халăх сăмахлăхĕнчен**

Халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем. Вĕсен этемĕн ăс-тăнĕн ырă йăлисем. Ваттисен сăмахĕсемпе туптарусем. Писательсем çырнă юмахсемпе юптарусем.

**Кусем - манăн туссем**
Ачасен пурнăçĕ, вĕсен юлташлăхĕпе туслăхĕ, ĕçченлĕхĕпе сăпайлăхĕ. Туслă тантăшсем тăван халăхăн ырă йăли-йĕркине асра тытни.
**Ырăпа усал**
Ултавпа суя , тӳрĕлĕхпе чăнлăх, хĕрхенӳпе хытаă чунлăх, чурăслăх, ĕçченлĕхпе наянлăх. Каппайчăклăхпа сăпайлăх, тӳрккеслĕхпе ырă кăмăллăх çинчен калакан хайлавсем, юмахсем.
**Атте-анне пурри - телей тата пуянлăх**
Çемье, кил-йыш, çывăх çынсем çинчен калакан хайлавсем.
**Ӳсен-тăран тĕнчинче**
Вăрман-çаран, чечек -курăк çинчен калакан хайлавсем.
**Çуркунне çитсессĕн**
Çурхи вăхăтра пурнăç илемĕпе унăн асамлăхне сăнлакан, çак илеме упрама чĕнекен хайлавсем.
**Чĕр чунсем - пирĕн туссем**
Ачасемпе чĕр чунсем хушшинчи хутшăну. Чĕр чунсене юратас, шеллес, хӳтĕлес туйăмсене çуратакан хайлавсем.
**Вăрçă кĕрленĕ чух**
Тăван çĕршывăн аслă вăрçин паттăрĕсем, тыл ĕçченĕсем, Аслă Çĕнтерӳ çинчен калакан хайлавсем.
**Çу пуçланчĕ**
Çуллахи çут çанталăк, тавралăх илемĕ.

**КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ**
Вулав материалĕ. Кĕçĕн çулхи ачасем валли кăларнă чăваш, вырăс тата ытти тăванла халăхсен, ютри çыравçăсен кĕнекисем. «Çил çунат» журналпа «Тантăш» хаçатри материалсем.
Вулав тематики. Аваллăх çинчен. Ырă пурнăça ĕмĕтленсе пурăнакан халăхăн кулленхи ĕçĕсем. Ачасен ĕçĕ-хĕлĕ. Чăваш, вырăс тата ытти тăванла халăхсен юмахĕсем. Тăван халăх историйĕпе унăн ывăлĕ-хĕрĕ, ал ĕç тата ăс-хакăл культури çинчен çырнă кĕнекесем. Наукăпа техника темипе çырнă ачасем ăнланмалла статьясем. Темтепĕр курса çӳрени çинчен калакан хайлавсем.
Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси. Класс тулашĕнчи вулав урокне хатĕрленнĕ май кирлĕ кĕнекене хар-пăр хăй тĕллĕн суйласа вулама, тĕрлĕрен пулăшу кĕнекипе, хаçат- журналпа усă курма пĕлесси.
Вĕрентуçĕ сĕннĕ е харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса мĕн вуланине (унăн пайĕсене) кĕскен каласа парасси, вуланă сăнар çинчен çыхăнуллă калав тăвасси. Вулама сĕннĕ кашни темăпах 3-5 кĕнеке таран пĕлесси. Пулăшу кĕнекисемпе (словарь, справочник) усă курасси.«Тантăш» хаçатпа «Çил çунат» журнала тĕллевлĕ вуласси, вĕсемпе урокра тата класс тулашĕнче усă курасси.

**Тематика планĕ**

## 1 класс

| №\№ | Раздел ячĕ | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Шкула вĕренме каяр-ха | 2 |
| 2 | Халăх сăмахлăхĕ | 4 |
| 3 | Юмах юпа тăрринче… | 1 |
| 4 | Вăйă вылятпăр | 2 |
| 5 | Теттесем | 1 |
| 6 | Ачасем çинчен | 2 |
| 7 | Чĕр чунсем çинчен | 3 |

| | | |
|---|---|---|
| 8 | Тавралăх – асамлă тĕнче | 1 |
| 9 | Килсе çитрĕ хаваслă хĕл | 3 |
| 10 | Ача – пăча сăмахлăхĕ | 3 |
| 11 | Юмах ятăм, юптартăм | 1 |
| 12 | Пирĕн вăйă-кулă | 1 |
| 13 | Ачасем çинчен | 4 |
| 14 | Чĕр чунсем çинчен | 3 |
| 15 | Тавралăх – асамлă тĕнче | 2 |
| | Пурĕ | 33 |

## 2 класс

| № | Раздел | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Вулав карти. Шкула. | 1 |
| 2 | Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв? | 4 |
| 3 | Халăх сăмахлăхĕнчен. | 2 |
| 4 | Юмахсем | 4 |
| 5 | Кĕркунне. | 2 |
| 6 | Эпир – туслă та хаваслă ачасем. | 4 |
| 7 | Ĕç телей те савăнăç кӳрет | 3 |
| 8 | Хĕлле. | 4 |
| 9 | Тăван кил-йышра. | 1 |
| 10 | Килчĕ ырă çуркунне. | 3 |
| 11 | Чĕр чунсем – пирĕн туссем. | 3 |
| 12 | Ӳсен-тăран тĕнчи. | 2 |
| 13 | Çу уйăхне кĕтĕмĕр | 1 |
| | Пурĕ: | 34 |

## 3 класс

| № | Раздел | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Ак çитрĕ сентябрь | 3 |
| 2 | Чăваш çĕршывĕ | 3 |
| 3 | Кĕркунне | 3 |
| 4 | Халăх сăмахлăхĕ | 4 |
| 5 | Улăп йăхĕнчен эпир, туссем | 2 |
| 6 | Юмах юпа тăрринче | 3 |
| 7 | Асамçă хĕл | 4 |
| 8 | Эпир – сăпайлă ачасем | 4 |
| 9 | Çур хаваслăхĕ | 4 |
| 10 | Чĕр чун тĕнчи | 3 |
| 11 | Ытарайми, асран кайми тăван тавралăх | 2 |
| | | 34 |

## 4 класс

| № | Раздел | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Аван – и, шкул саккийĕ!.. | 1 |
| 2 | Килсе çитрĕ тулăх кĕр. | 4 |
| 3 | Ку вăл – ман Тăван çĕршыв. | 4 |
| 4 | Пирĕн йăла – йĕрке. | 1 |
| 5 | Шурă юр çусассăн. | 3 |
| 6 | Чăваш халăх сăмахлăхĕнчен. | 4 |
| 7 | Кусем – манăн туссем. | 4 |
| 8 | Ырăпа усал. | 2 |
| 9 | Атте – анне пурри – телей тата пуянлăх. | 1 |
| 10 | Ӳсен – тăран тĕнчинче | 1 |
| 11 | Çуркунне çитсессĕн….. | 3 |
| 12 | Чĕр чунсем – пирĕн туссем. | 2 |
| 13 | Вăрçă кĕрленĕ чух. | 2 |
| 14 | Çу пуçланчĕ. | 2 |
| 15 | Пурĕ | 34сех |

## Вĕрентӳ планĕ

**1 класс**

| № п\п | **Урок теми** | **Сехет шучĕ** |
|---|---|---|
| **Шкула каяр-ха вĕренме. (2 сех.)** | | |
| 1 | Эпĕ халĕ шкул ачи. Илемлĕ сăмахлăх тĕнчине çитме пулăшакан предмет – литература вулавĕ. | 1 |
| 2 | Хайлав. Илемлĕ хайлав. | 1 |
| **Халăх сăмахлăхĕ. (4 сех.)** | | |
| 3 | Халăх сăмахлăхĕ (сăвви-юрри) | 1 |
| 4 | Чĕнӳ-йыхрав сăвви-юрри. | 1 |
| 5 | Шутлав сăввисем. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 6 | Хăвăрткаларăшсем. Тупмалли юмахсем. | |
| **Юмах юпа тăрринче… (1 сех)** | | |
| 7 | Юмахсем. «Пукане юмахĕ», «Упапа хĕр ача». | 1 |
| **Вăйă вылятпăр. (2 сех.)** | | |
| 8 | Сăвăласа çырнă хайлавсем. | 1 |
| 9 | Çыравçă хайланă юмах. В.Сутеев «Шăшипе кăранташ» юмахĕ. | |
| **Теттесем. (1 сех.)** | | |
| 10 | Шӳтлĕ сăвăсем. П.Çăлкуç «Ăмсанса пăхать Кампур» М.Волков «Пăрçа хуралçисем» Н.Карай «Пулăра» | 2 |
| **Ачасем çинчен. (2 сех.)** | | 1 |
| 11 | Прозăпа çырнă хайлавсем. «Калав»ăнлав. ( Н.Ишентей «Хуплу пĕçерни», П. Яккусен «Анне», И.Микулайĕ «Арбуз» суйласа ил) | 1 |
| 12 | Калавра мĕн çинчен калани. Калав ячĕ.<br>Л.Сарине «Арман авăртать» | 2 |
| **Чĕр чунсем çинчен.(3 сех.)** | | 1 |
| 13 | Юптару.<br>П.Çăлкуç «Хур аçи»,<br>Ю.Мишши «Лашапа кашкăр». | 3 |
| 14 | О.Печников «Усала вĕрентнĕ путек», Е.Чарушин «Томка тĕлĕкĕсем». | 1 |
| 15 | В.Сутеев «Кăмпа айĕнче». | 1 |
| **Тавралăх – асамлă тĕнче. (1 сех.)** | | |
| 16 | А.Пăртта «Çумăр ташши»,<br>А.Ыхра «Пукан», Л.Сарине «Вăрманта | 1 |
| **Килсе çитрĕ хаваслă хĕл. ( 3 сех.)** | | |
| 17 | В.Эктел «Юр», П.Çăлкуç «Ытарми хĕл», Л.Смолина «Тăвайкки». | |
| 18 | В.Эктел «Хĕл Мучи», П.Çăлкуç «Тăвайкки», Е.Кузнец «Çеменпе Сивĕ Мучи». | 1 |
| 19 | Л.Салампи «Юр пĕрчи», «Икĕ шартлама» | |
| **Ача – пăча сăмахлăхĕ (3 сех)** | | |
| 20 | Кулленхи сăвă-юрă. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| | | |
| 21 | Пăчăрсем.. Чĕнӳ-йыхрав сăвви-юрри, хăвăрт сăмах, тупмалли юмахсем. | 1 |
| 22 | Пулмасла халап. Вĕççĕр такмак. Шӳт. | 1 |
| **Юмах ятăм, юптартăм. (1 сех.)** | | |
| 23 | Улăп халапĕсем. «Тилĕпе Качака таки». | 1 |
| **Пирĕн вăйă-кулă (1 сех.)** | | |
| 24 | Л.Сорокина «Пукане», Ю.Силэм «Шак-шак-шак», Р.Сарпи « Ташлать Илемпи». | 1 |
| **Ачасем çинчен ( 4 сех.)** | | |
| 25 | Н.Ыдарай «Чăваш ачи», Ордем Гали «Пысăк ĕç». | 1 |
| 26 | В.Голявкин «Инкек», Р.Сарпи.«ӳкерчĕк». | 1 |
| 27 | А.Ыхра калавĕсем, Н.Карай «Макăрмарĕ». | 1 |
| 28 | М.Салихов «Усăллă кану», В Осеева «Ырă ĕç», Н.Рогачёв «Пулăçсем». | 1 |
| **Чĕр чунсем çинчен (3 сехет)** | | |
| 29 | И.Яковлев «Хураçка», А.Ыхра«Шурка»,Е.Чарушин «Томка ишме вĕренни». | 1 |
| 30 | К.Чуковский «Чĕрĕп кулать», Э.Шим «Шапапа калта», «Пакшапа пăрăнтăк». | 1 |
| 31 | Ю.Петров «Путене», И.Малкай « Тăри», С.Асамат «Йăва»,<br>О. Печников «Чĕр чунсем те çынсем пекех». | 1 |
| **Тавралăх – асамлă тĕнче (2сех.)** | | |
| 32 | С.Соколинский «Çумăр», П.Çăлкуç «Çумăр умĕн». | 1 |
| 33 | Х.Çеменĕ «Çуркунне». В.Тарават «Кăнтăр çĕршывĕнче», А. Ыхра «Çурхи илем». | 1 |
| | **Пĕтĕмĕшле** | **33 сехет** |

## 2 класс

| № | Тема | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | **Шкула**<br>Эпĕ иккĕмĕш класс ачи. « Илемлĕ хайлав», «автор», «хайлаври сăнарсем», «хайлавра сăнланă ĕç йĕрки» ăнлавсем. | 1 |
| | **Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв**<br>Савнă çĕр, Чăваш çĕршывĕ .Публицистика хайлавĕн тĕп уйрăмлăхĕ. | **4 сех.**<br>1 |

| | | |
|---|---|---|
| 2 | | |
| 3 | Пулăшмарĕ". Сăвăласа çырнă хайлав | 1 |
| 4 | Сăвăласа çырнă илемлĕ хайлав | 1 |
| 5 | Ăслăх хайлавĕ; унăн тытăмĕпе чĕлхи | 1 |
| 6 | **Халăх сăмахлăхĕнчен**<br><br>Халăх сăмахлăхĕ Тупмалли юмахсем. Пулмасла халапсем Улăп халапĕсем | **2 сех.**<br><br>1 |
| 7 | Хутлам е вĕççĕр такмаксем. Йăла юррисем Вăйă юррисем. Çăварни. Пуплешӳ сăввисем. Чăвашсен ача-пăча вăййисем. | 1 |
| 8 | **Юмахсем**<br><br>Чĕр чунсем çинчен калакан юмахсем. Чĕр чунсем çинчен калакан автор юмахĕсем. | **4 сех.**<br><br>1 |
| 9 | Йăла юмахĕсем Автор çырнă йăла юмахĕсем | 1 |
| 10 | Асамлă юмах. Асамлă юмах паллисем Хайлав теми, тĕп шухăшĕ | 1 |
| 11 | Сăвăласа çырнă юмахсем. Автор юмахĕ. . Сăвăлла тата прозăлла хайлавсенчи сăнарлăх мелĕсем | 1 |
| 12 | **Кĕркунне**<br><br>Ылтăн кĕркунне. Калулл тата сăнлавлă калвсем.<br><br>Сăвăласа çырнă калавсем. | **2 сех.**<br><br><br><br>1 |
| 13 | Хура кĕркунне. Çут çанталăк пулăмĕсене сăнлакан сăвăласа çырнă илемлĕ хайлавсем | 1 |
| 14 | **Эпир туслă та хаваслă ачасем**<br><br>П.Хусанкай «Шкул ачи». С. Иванов «Сапăрлăх çинчен». | **4 сех.**<br><br>1 |
| 15 | Сăвăлла тата прозăлла юптару. | 1 |
| 16 | Шӳтлĕ сăвăсем. Сăвăласа çырнă шӳтлĕ калавсем | 1 |
| 17 | Калаври ĕçсен аталанăвĕ. Калаври сăнарсем. Хайлаври тĕп сăнарсем. Хайлавăн тĕп шухăшĕ | 1 |
| | **Ĕç телей те савăнăç кӳрет** | **3 сех.** |

| | | |
|---|---|---|
| | | |
| 18 | Чĕр чунсем ҫинчен калакан юмахсем Илемлĕ хайлаври сăнарлăх мелĕсем. | 1 |
| 19 | «Кулач»- йала юмахĕ Яковлев «Кулачă» | 1 |
| 20 | Пысăк калăпашлă сăвăлла хайлав(поэма.) | 1 |
| 21 | **Хел**<br>Сут ҫанталăк пулăмĕсене сăмахпа ўкерни.<br>Сăнлав тумалли хатĕрсемпе мелсем. | **4 сех.**<br>1 |
| 22 | Ансат ăслалăх хайлавен уйрамлăхесемпе паллаштарасси | 1 |
| 23 | Сăмахлă укерчĕксем туни.Сăнарлăх мелĕсем В.Эктелен «Юр пике сăвви, ҫут ҫантăлак илемĕ | 1 |
| 24 | Калаври ĕҫссен аталанăве.Калавҫă кăмăлĕ палăрни. Автор юмахĕ | 1 |
| 25 | **Тăван кил-йышра**<br>Тĕнчере чи хакли- манăн юратнă анне. Сăмахлă укерчĕк Текстра каламан автор шухăш- кăмăлĕ палăрни | **1 сех.**<br>1 |
| 26 | **Килчĕ ырă суркунне.**<br>Сăвă. Сăнлавлă калав. Публицистика хайлавĕ. Пайрамсем (детальсем) | **3 сех.**<br>1 |
| 27 | Хĕвел пахать, юр каять Кĕҫех ҫулла пусланать. Хайлав тата ўнерҫĕ ўкерчĕкĕ | 1 |
| 28 | Ҫуркунне. Ҫут ҫанталăка сăнани Сăвăри сăмахсен йĕрки. Танлаштару | 1 |
| 29 | **Чĕр чунсем – пирĕн туссем.**<br>Хайлав ячĕ, содержанийĕ тата тĕп шухăшĕ. | **3 сех.**<br>1 |
| 30 | Хайлаври самантсем. Хайлав теми тата ячĕ. | 1 |
| 31 | Юратнă чĕр чунсем. Танлаштару. Темăпа тĕп шухăш. | 1 |
| 32 | **ўсен – тăран тĕнчинче**<br>Пĕр йăхри йывăҫсем . Калав. Сăнлав. | **2 сех.**<br>1 |
| 33 | Ҫанталăк, унăн паллисем. Сăнлăхпа сăнарлăх. Ҫут ҫанталăка сăнас | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| | ăсталăх. | |
| 34 | **Çу уйăхне кĕтĕмĕр.**<br><br>Сăвăра туйăмсем палăрни. Сасă çырăвĕ Сăнлавлă калаври ĕç йĕрки. | **1 сех.**<br><br>1 |
| | **Пĕтĕмĕшле:** | **34 сех.** |

## 3 класс

| № | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | **Ак çитрĕ сентябрь**<br><br>Литература вулавĕ предметĕн 3 –мĕш класс валли палăртнă тĕллевĕсемпе задачисем<br>*(Г. Волковăн «Çамрăкла вĕренни – чул çинче» калавĕпе тата Г Сапгирăн «Вĕреннĕ Лаша» сăвви).* | 1 |
| 2 | Калав, калаври сăнарсем, калаври ĕç аталанăвĕ ăнлавсем. (*Х. Уярăн «Мăйăр хуппи калавĕ*) | 1 |
| 3 | Калаври сăнарсем. ĕç аталанăвĕ. Пулăмсем, сăнарсен ĕçĕсемпе хăтланăшĕсен хушшинчи çыхăну. («*Чи хаклă парне» калав)* | 1 |
| 4 | **Чăваш çĕршывĕ**<br>Савнă çĕр, Чăваш çĕр-шывĕ. Чăваш республикин Патшалăх атрибучĕсем. (*К. Ушинскин «Тăван çĕр-шыв - пирĕн анне» хайлавĕ)* | 1 |
| 5 | КТВ: Шкула, ачасемĕр, шкула. *(Ю.Петров «Урокра»,А.Миллин «Итлемен пулсан»)* | 1 |
| 6 | Калав ячĕ, теми, тĕп шухăшĕ.<br>(*Хуначи Кащкăрăн «Ылтăн çĕр» калавĕ)* | 1 |
| | **Кĕркунне** | 1 |
| 7 | Кĕр пуçламăшĕн сăнлăхĕсем, вĕсене сăнламалли мелсем.(*Н. Исмуковăн «Кĕр пасарĕ» сăвви)* | 1 |
| 8 | Ылтăн кĕркунне сăнлăхĕсем, вĕсене сăнлани. Сăнарлăх хатĕрĕсем. (*Н. Теветкелĕн «Кĕрхи сăнсем» сăвви)* | 1 |
| 9 | Хайлавăн сюжет аталанăвĕ. Чи çивĕч самант. Калаври сăнарсем. Тĕп сăнар. (*О. Туркайăн «Çулçă» калавĕ,сиветет санталак)* | 1 |
| 10 | **Халăх сăмахлăхĕ**<br>Тупмалли юмахсем – халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем. Çырвçăсем хайланă тупмалли юмахсем. | 1 |
| 11 | Ача-пăча вăййисем. («Ылтăн пучах» 45-54с) | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 12 | Пулмасла халап. (Ылтан пучах 54-55 стр.)Çыравçăсем хайланă пулмасла халапсем.<br>(*К. Чулкаçăн «+сансене ертсе килни» хайлавĕ.)* | 1 |
| 13 | КТВ :Еç – пурнăс илемĕ. Юптарусем.<br>(*Эзопăн «Ула куракпа тилĕ» тата И. Крыловăн «Ула куракпа тилĕ» юптарăвĕсем.)* | 1 |
| 14 | **Улăп йăхĕнчен эпир, туссем**<br>Мифсем. Улăп халапĕсем.<br>*(Г. Юмартăн «Улăпсем» хайлавĕ.) (Ту синчен анна Улап)* | 1 |
| 15 | Тĕрлĕ халăх халапĕсем, вĕсен пĕрпеклĕхĕпе уйрăмлăхĕсем. (*«Ной карапĕ»)* | 1 |
| 16 | **Юмах юпа тăрринче**<br>КТВ: Еç – пурнăс илемĕ. Чăваш халăх юмахĕ. Чĕр чун юмахĕсем.<br>*(«Чее такасем» юмах)* | 1 |
| 17 | Тĕрлĕ халăх юмахĕсем. Йăла юмахĕсем. (*Çăмартапа тăрăхла пăрçа» юмах.)*<br>Асамлă юмахсем. (*«Курай юмахĕ». Пакшапа майар)* | 1 |
| 18 | Автор юмахĕсем.<br>(*А. С. Пушкинăн «Тинĕс кукринче» юмахĕ)* | 1 |
| 19 | Поэзи хайлавĕсенчи сăнарлăх мелĕсем. (*В Эктелĕн «Хĕл пуçламăшĕ» сăвви, Пушкинăн «Хĕлле» сăвви, )* | 1 |
| 20 | Юмахра сăнланнă вăхăтпа сăнарсен характерĕн шайлашăвĕ.<br>(*Хырпа Чăрăш тата Уртăш мĕншĕн яланах симĕс?» юмах,)* | 1 |
| 21 | Сăвăласа çырнă илемлĕ хайлавсен кĕввипе чĕлхи. вĕсенче автор кăмăл- туйăмĕ палăрни.<br>(*В Харитоновăн «Йĕлтĕрпе» тата А Смолинăн «Халăх хайлавĕ майлă» сăввисем.)* | 1 |
| 22 | Калав теми, тытăмĕ, тĕп шухăшĕ.<br>(*Г. Харлампьевăн «Мулкач йĕрĕпе» Намаслантаракн сентерусе)* | 2 |
| 23 | **Эпир – сăпайлă ачасем**<br>Н. Карай. «Йăмăк». М. Джалиль. «Çывракан ача». Р. Минатуллин «Пулăшакан» | 1 |
| 24 | А Кăлкан «Наян Кампур», А. Галкин «Шăна кăмпин шăпи» | 1 |
| 25 | КТВ : Вăрман калавĕсем.<br>(*Г Луч çырн «Пăшалсăр сунарçă», «Вăрман хĕрринчи çурт», «Кĕтӳç шăхличĕ», Н Сладковăн «Упа», «Тилĕ çурисем», А. Ильинăн «Вăрманти тĕл пулу», З Нестероваăн «Чее мулкач» кĕнекесем)* | 1 |
| 26 | Исмай Исемпек. «Шăвăç витре». К. Ушинский. «Вăрманти ачасем» | 1 |
| 27 | **Çур хаваслăхĕ**<br>Н. Исмуков. «Çурхи тĕнче», Л. Смолина «Çуркунне пуçланать» сăввисем | 1 |
| 28 | Н. Некрасов. «Ешĕл шав». Уйăп Мишши «Çурхи вăйă» | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 29 | КТВ: Çут çанталăк тата эпĕ. Соколов-Микитов «Вăрманта» | 1 |
| 30 | К. Иванов «Çуркунне çитсен». А. Артемьев «Çурхи кун» | 1 |
| 31 | **Чĕр чун тĕнчи**<br>Н. Ишентей «Аптраман кăвакалсем». С. Элкер «Кашкăрсемпе çапăçни.». | 1 |
| 32 | Ăсанпа Хураçка. Н.Иванов. Г. Орлов «Кащкăр тавăрăвĕ» | 1 |
| 33 | **Ытапайми, асран кайми таван тавралах**<br>И. Дубанов «Эл кӳлли». Г. Орлов «Çухату». | 1 |
| 34 | КТВ: Юмах ятăм, юптартăм. У. Мишши «Çуллахи каникул». | 1 |
| | Пуре: | 34 |

## 4 класс

| № | Тема | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| | **Аван -и шкул саккийĕ (1 сехет)** | |
| 1 | Ю. Петров «Сентябрь ирĕ “ | 1 |
| | **Килсе çитрĕ тулăх кĕр (4 сехет)** | |
| 2 | Митта Ваçлейĕ «Кĕрхи илем», Г. Орлов «Сентябрь» | 1 |
| 3 | Г. Луч «Тăрнасем» | 1 |
| 4 | Л Сильвестров «Кĕркунне макăрать» | 1 |
| 5 | **КТВ.** Çут тĕнче ытамĕнче. Экскурси «Кĕрхи çут çанталăк» | 1 |
| | **Ку вăл - ман Тăван çĕршыв (4 сехет)** | |
| 6 | В. Ахун «Тăван чĕлхе», П. Хусанкай «Эп - чăваш ачи» | 1 |
| 7 | И. Я. Яковлев чăваш халăхне панă Халал | 1 |
| 8 | И. Шухши «Эпĕ- чăваш» | 1 |
| 9 | **КТВ.** Савнă ен Чăваш çĕршывĕ. | 1 |
| | **Пирĕн йăла- йĕрке (1сехет)** | |
| 10 | Хв.Уяр « Йăла- йĕркесем». «Пирĕн çемьери йăла-йĕрке» калаçу | 1 |
| | **Шурă юр çусассăн… (3 сехет)** | |
| 11 | Н. Сладков «Пĕрремĕш юр». | 1 |
| 12 | Н. Сладков «Кайăксем ăçта çывăраççĕ» | 1 |
| 13 | **КТВ** «Хĕл асамçă» Экскурси «Шурă юрĕ çурĕ-çурĕ….» | 1 |
| | **Чăваш халăх сăмахлăхĕнчен (4 сехет)** | |
| 14 | Сăвăлла юмах. «Куян тус». Вĕçсĕр юмах «Мăйăр юмахĕ» | 1 |
| 15 | Пулмасла халап. «Мулкач». Витлешӳ такмакĕсем. Шӳтсем. | 1 |
| 16 | Уяв юррисем. Вăйă юррисем. Халăх юррисем | 1 |
| 17 | **КТВ**. Чăваш халăх сăмахлăхĕнчен. Проект «Ача - пăча самахлăхĕ» | 1 |
| | **Кусем – манăн туссем (4 сехет)** | |
| 18 | А. Галкин «Математика мыскари» | 1 |
| 19 | В. Дмитриев «Чаплă парне» | 1 |
| 20 | К. Груйя «Пакăлти» | 1 |
| 21 | **КТВ**. Ачасен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ. | 1 |
| | **Ырăпа усал (2 сехет)** | |
| 22 | Л. В. Мартьянова «Чĕлхесĕр Иван» | 1 |
| 23 | А. М. Горький «Эрхип мучипе Ленька» | 1 |
| | **Атте-анне пурри- телей тата пуянлăх (1 сехет)** | |
| 24 | Л.Смолина «Сăпка юрри», А. Смолин «Анне- пирĕн тĕнче» | 1 |
| | **Çуркунне çитсессĕн…(3 сехет)** | |
| 25 | К. Турхан «Çуркунне» | 1 |
| 26 | А. Савельев «Шăнкăрч килни», Г. Орлов «Курак» | 1 |
| 27 | **КТВ**. Çуркунне пуçланать… | 1 |
| | **Вăрçă кĕрленĕ чух (2сехет)** | |
| 28 | Н. Евстафьев. «Амăш пилĕ» | 1 |
| 29 | **КТВ**. Тăван çĕршывăн аслă вăрçи А. Клементьев «Эпир çĕнтертĕмĕр» | 1 |
| | **Ӳсен-тăран тĕнчинче (1 сехет)** | |
| 30 | Юхма Мишши «Курăк академийĕ» | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| **Чĕр чунсем – пирĕн туссем (2сехет)** | | |
| 31 | А. Кăлкан «Йытăпа кушак», Ю. П. Петров «Тăрна ташши» | 1 |
| 32 | **КТВ.** Чĕр чунсем – пирĕн туссем | 1 |
| **Çу пуçланчĕ (2 сехет)** | | |
| 33 | Г.Федоров « Çу çитрĕ», Г. Орлов «Çуллахи вăрманта» | 1 |
| 34 | **КТВ.** Çулла вуламалли кĕнекесем | 1 |
| | **Пурĕ** | **34сехет** |